Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

78 (7395) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Вăрман ĕçченĕсен кунĕ

**Вăрман хуçалăхĕпе вăрман продукцине тирпейлекен комплексăн хисеплĕ ĕçченĕсемпе ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕпе саламлатăп!

Эсир хăвăрăн пурнăçăра пысăк тĕллеве халалланă – çут çанталăка хӳтĕлессине тата илемлĕхе сыхласа хăварассине. Чăваш Республикин территорийĕн виççĕмĕш пайне вăрмансем йышăнаççĕ. Çавăнпа та эсир пурнăçлакан ĕç пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Вăл вăрман ырлăх-пурлăхĕпе пĕлсе усă курма тата ăна хушса пыма май парать.

Паян республикăн вăрман промышленноçĕн комплексне аталантармалли приоритетлă çул-йĕрĕсенчен пĕри йывăç продукцине анлăн тирпейлессипе малта пыракан технологи мелĕсене алла илесси пулса тăрать. Ку вăл хальхи вăхăтри конкурентлă продукци туса кăларма май парĕ.

Аренда хутшăнăвĕсем вăрман ресурсĕсемпе тухăçлă усă курма пулăшма тивĕç. Лесничествăн нумай вăхăтлăх пĕрремĕш аренда килĕшĕвне кăçал тунă. Малашлăх пирки шухăшлакан хуçа тупăннă май вăрмансенче тасарах та хăтлăрах пулĕ, отрасль предприятийĕсем валли килекен чĕр тавар пахалăхĕ те ӳсĕ.

Шанатăп, республика вăрман хуçалăхĕпе вăрман промышленноçĕн комплексĕн ĕçченĕсем умри задачăсене татса парассишĕн, ĕç кăтартăвĕсене ӳстерсе пырассишĕн, çынсенче çут çанталăкшăн тăрăшас туйăма аталантарассишĕн хăйсенчен мĕн килнине пĕтĕмпех тăвĕç.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçусем, телей сунатăп.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

---

**Вăрман ĕçĕнче вăй хуракан хисеплĕ ĕçченсем, çак отраслĕн ветеранĕсем, çут çанталăк тусĕсем!**

Сире Вăрман ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп. Йывăç лартса ӳстерсе, тăван тавралăха илемлетесси — çав тери пархатарлă ĕç. Мĕн чухлĕ чун ăшши, тăрăшулăх кирлĕ çакна валли. Ахальтен каламан вĕт сыннăн хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕр йывăçран та пулин кая мар лартса ӳстермелле, тесе. Хăвăрăн пархатарлă ĕçĕрпе эсир ситĕнекен ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăратăр.

Вăрман - çутçанталăкăн калама çук хаклă парни. Ăна упрасси тата пуянлатасси кашни çыннăн кулленхи тивĕçĕ пулнине ырми-канми ĕçĕрпе çирĕплетсе паратăр. Çак ĕçре эсир малашне те пĕтĕм чун хавалĕпе тăрăшасса, ыттисене те унта ытларах явăçтарасса эпĕ шансах тăратăп.

Вăрман – халăх пуянлăхĕ. Вăл хăй тĕллĕн - этем ăшшисĕр, тăрăшулăхсăр ситĕнмест, аталанса ӳсмест. Эсир çакна ăнланса, чун-чĕрепе туйса тăратăр. Кулленех кашни çынна кирлĕ ĕçе чыслăн пурнăçлатăр. Тавах сире çакăншăн. Малалла та тăрăшулла пулăр. Кăçал – Ăс-хакăлпа чун аталанăвĕн çулталанăкĕнче районта пурăнакан кашни çын тăван Муркаш Ен илемĕшĕн ытларах тăрăшасса, тăван çĕре юратнине пархатарлă ĕçпе çирĕплетессе ĕненетĕп.

Сире, сирĕн çемйĕрсене çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей, вăрăм кунçул сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Юбилей

### Саламлатпăр



Район центрĕнче пурăнакан тата Муркаш райповĕн «Радуга» кафере нумай çул аслă повара ĕçлекен юратнă тăхлачăна **Тамара Ивановна КОЛБАСОВАНА** 50 çул тултарнă ятпа мăшăрĕпе, ывăлĕсемпе, кинĕпе пĕрле чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕçре тата пурнăçра пухнă пуян опытпа тăвансемпе ĕçтешсене татах нумай çул пулăшса савăнтарса пурăнма çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

Хисеплĕ тăванăмăр! Санăн пурнăçу малашне те çуркунне пек савăк, ыр çулла пек ăшă, кĕркунне пек тулăх пуласса шанса тăратпăр. Çапла пултăр та.

**Салампа Гордеевсен çемйи.**

---

Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, хуньстарике – Шупуç ялĕнче пурăнакан **Семен Степанович СТЕПАНОВА** 65 çулхи юбилейĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, пурнăçра пур енĕпе те ăнăçу сунатпăр. Çемьере яланах килĕшӳ, тулăх пурнăç пултăр. Çемье ăшши, мăшăрун, ачусен, мăнукусен, кинсен юратăвĕ сана пурнăçра вăй-хал парса тăччăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

Сана юбилей уявне тулли кĕрекере ачусемпе, сывăх тăванусемпе ирттерме ыр сунатпăр тата нумай çул пурăнма Турри сана сывлăх патăр, ватлăху канлĕ пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем.**

---

Пирĕн хаклă çыннăмăра – Мăн Сĕнтĕр больницинче чылай çул хушши врач пулса ĕçленĕ **Сергей Михайлович ВАНЮКОВА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. 70 çул тултартăн эсĕ. Калама кăна çăмăл. 70 çул вăл 70 кун мар вĕт. Тем те курма-тӳсме тивнĕ пулĕ çак тапхăрта. Сана çак юбилей ячĕпе саламланă май малашне те çирĕп сывлăх, ăнăçусем, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Самушковсен, Ильгечкинсен, Высотинсен çемйисем.**

## Çырăнтару-2007
## Çитес çул илсе тăма

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.**

## Сентябрĕн 19-мĕшĕнче – Пĕтĕм тĕнчери мир кунĕ

**Хисеплĕ ентешсем!**

Сире пурне те Пĕтĕм тĕнчери мир кунĕ ячĕпе чун – чĕререн саламлатăп. Ăна Пĕрлешӳллĕ Нацисен организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин 1982 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи резолюцийĕпе килĕшӳллĕн сентябрĕн виççĕмĕш ытлари кунĕнче ирттерме йышăннă. Кăçал ăна сентябрĕн 19-мĕшĕнче паллă тăватпăр.

Çак мирлĕ пурнăçа пире паянхи шур çӳçлĕ ветерансем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хăйсен юнĕпе чӳхесе татса пачĕç. Вĕсен умĕнче ĕмĕр-ĕмĕр парăмра эпир. Çак телейлĕ пурнăçа упрасси - кашни çыннăн тивĕçĕ. Паянхи çамрăксем те çĕршывăмăр умĕнчи хăйсен тивĕçне чун-чĕре хушнă пек пурнăçлаççĕ. Анчах та унта та кунта пулакан террорла актсем пирĕн тимлĕ те сыхă пулмалли пирки аса илтерсех тăраççĕ. Лăпкă та тăнăç пурнăçшăн тăрăшмалла пирĕн пурин те. Мирлĕ ĕçре çĕршыв çирĕплĕхĕшĕн вăй хумалла.

Сире пурне те кулленхи ĕçĕрте ăнăçу, мирлĕ пурнăç, çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Райадминистрацире

### Хастар ĕçшĕн

Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе вĕрентӳ ĕçченĕсен район профсоюз организацийĕн канашĕ, «Чувашсетьгаз» усă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» коллективĕ ыйтнисене тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнчи 315 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Газ промышленноçĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

**– Сергей Николаевич КОЗЛОВА,** «Чувашсетьгаз» усă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн юсавпа строительство тата монтаж участокĕн водитель-слесарьне;

**– Алена Павловна СТЕПАНОВАНА,** «Чувашсетьгаз» усă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕн автозаправка станцийĕн операторне.

2. **Манефа Валериановна КОЛЕСНИКОВАНА,** «Хорнуйĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан пуçламăш шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорне, вĕрентӳ учрежденине çĕнĕ вĕрену çулне хатĕрлессипе пысăк тӳпе хывнăшăн.

## Черетре – çĕр улми

# Çанталăк çирĕп тĕрĕслет



Уй-хир бригадин бригадирĕ Кронид Яриков паян кунĕпех хирте.



Герман Алжиров агрегачĕ пĕр тикĕс ĕçлет.



Пенсие тухнă пулин те, Галина Ивановапа Зоя Данилова яра кун хирте çĕр улми пуссинче.



Михĕсене вăр-вар тиеççĕ грузчиксем.

«Свобода» хуçалăхра ял хуçалăх культурисене пĕчĕк мар лаптăк çинче акса-лартса тăваççĕ. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем кăна 1200 гектара яхăн лаптăк йышăнаççĕ. Вĕсене, пĕтĕмĕшле илсен, пуçтарса илесси шутлă гектарсем кăна юлнă ĕнтĕ. Паян-ыран ĕçлемелĕх кăна. Çанталăкĕ май парсан. Çанталăкĕ вара кăçал уяр кунсемпе иртĕхтермест.

Черетре халĕ – çĕр улми. Ăна та хăй вăхăтĕнче пуçтарса илес пулать. Пур уйхир бригадинче те «иккĕмĕш çăкăра» кăларса пухма тытăннă ĕнтĕ.

– Бригадăра çĕр улми лаптăкĕ 130 гектара яхăн. Пĕтĕмпех «удача» сортли. 17 гектар йышăнакан хирте ăна кăларса пĕтертĕмĕр ĕнтĕ. Халĕ тепĕр хире куçрăмăр. Тухăç япăх мар. Гектар пуçне сахалтан та 200 центнер тухать,– каласа парать пĕрремĕш уй-хир бригадин бригадирĕ Кронид Яриков.– Ĕçсене пĕр тикĕс те кал-кал туса пыма вара çумăрсем чăрмав кӳреççĕ. Сăмах май, хуçалăхĕпе «иккĕмĕш çăкăр» 220 гектар çинче.

Çанталăк çумăрлă, тăпра нӳрĕ пирки копалкăсене пĕр тикĕс ĕçлеттерме çăмăлах мар. Апла пулин те кунта çĕр улми кăларакан Герман Алжиров хăйне çирĕплетсе панă агрегата тухăçлă ĕçлеттерме тăрăшать.

Копалка иртсе каять те хыççăн шултра çĕр улмисем выртса юлаççĕ. Вĕсене хуçалăх ĕçченĕсем хыççăнах пуçтарма пуçлаççĕ. Хирте тулли михĕсем хушăнсах пыраççĕ. Вĕсене грузчиксем çийĕнчех автомашинăсем çине тиесе хранилищĕне е сутлăх тĕрлĕ организацисене ăсатаççĕ. Уяр кун саманчĕпе туллин усă курмалла вĕт-ха.

Çĕр улми пуçтаракансене, грузчиксемпе водительсене тата трактористсене ĕç укçи тӳленисĕр пуçне натурăпа çĕр улмине 8 процент тӳлевсĕр уйăрса пама пăхнă. Çавна май хуçалăха çĕр улми пуçтарма ытти хуçалăхсенчен те, Шупашкар районĕнчен те килнисем пур.

Акă, каллех çумăр пĕлĕчĕсем капланса килчĕç. Çумăр шăпăртатма пуçларĕ...

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Йыхрав

### Саратовра çĕр улми кĕтеççĕ

Кĕркунне хушма хуçалăх тытакансемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен те, çавăн пекех ял хуçалăх предприятийĕсен те пĕр тĕллев: ситĕнтернĕ ял хуçалăх продукцийĕне йĕркеллĕ вырнаçтарасси. Халĕ, акă, çĕр улми те кăларатпăр. Кăçал вăл шултра тухнине палăртаççĕ. Район администрацийĕ вара çĕр улмипе пахча çимĕçе вырнаçтарма тепĕр адрес парать.

Саратов хулин администрацийĕ сентябрĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 20-мĕшĕнченхи тапхăрта 9 пасарта "2006 çулхи кĕр парнисем" ятпа, çĕр улмипе пахча çимĕç сутассипе ярмăркка ирттерет.

Çакна палăртмалла. Саратов облаçĕнче сутлăх çĕр улми тата хăш-пĕр пахча çимĕçсем çук. Çавăнпа та асăннă ярмăрккăна хутшăнма тăрăшăр.

Телефонсем: (845-2) 26-04-54, 26-09-02, 73-47-19.

**Саратов хулин администрацийĕн экономика ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕ.**